Çĕмĕрлери обществăпа политика хаçачĕ

# Малалла

2010
ноябрĕн
4-мĕшĕ
КĔÇНЕРНИКУН

№ 165-168
(10570-10573)

Сутмалли хакĕ ирĕклĕ.

1935 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

www.VPERED21.ru



# Ноябрĕн 4-мĕшĕ - Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ



**Хаклă ентешĕмĕрсем!**
**Сире Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

Пирĕн çĕрĕн авалхи историйĕ пĕрлĕх чăвашсемшĕн еплерех пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине çирĕплетсе парать. «Çынсăр çын пурăнаймасть», – теççĕ ăслă çынсем. Мĕн авалтан халăх йăли – ниме – пулăшнипе çуртсем хăпартнă, пĕр-пĕрне пулăшу кӳнĕ. Пурте пĕрле савăннă, куляннă, ĕçленĕ, каннă, чи илемлĕ уявсене паллă тунă.

Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ – Раççей патшалăхĕпе килĕшĕвĕн ку чухнехи, çамрăк, çапах та пĕтĕм халăх уявĕ пулса тăнă кун. Пĕр ӳстермесĕрех каламалла: интерессемпе тĕллевсен, тĕрĕслĕхе ĕненнин символĕ, пĕрлĕх кашни çемьерех пĕр-пĕрне хисепленинчен, пĕр-пĕриншĕн тăрăшнинчен, общество пурнăçĕнче харпăр хăйĕн вырăнне ăнланнинчен йĕркеленеççĕ. Республикăпа çĕршыв пуласлăхĕ эпир мĕн таран тӳрĕ кăмăллă, яваплăха туйса ĕçленинчен, пĕр-пĕрне хисепленинчен килет. Пĕрле эпир мĕн пур тĕллеве пурнăçлăпăр, Чăваш Ене тата илемлĕрех, пурăнмашкăн хăтлăрах тăвăпăр.

Пурне те пĕтĕм чун-чĕререн пысăк телейпе ырлăх-сывлăх, мирпе тăнăçлăх, лайăх кăмăл-туйăм сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ М.В. ИГНАТЬЕВ.**

**Хисеплĕ çĕмĕрлесем!**
**Сире патшалăх уявĕпе – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

Тăватă ĕмĕр каялла тĕрлĕ сословири, тĕрлĕрен тĕне ĕненекен тĕрлĕ халăх çыннисем пирĕн çĕршыва аркатса çитерне вырăнти вăрçăсем кирлĕ маррине ăнланса илнĕ, Раççей патшалăхне çăлса хăварнă, çĕршыва интервентсенчен хăтарнă тата пулас ăрусене Раççее упрамалли, çирĕплетсе пымалли çинчен халалланă.

Пире пурне те вăйлă, чечекленекен, пĕтĕм тĕнче хисеплекен Раççей кирлĕ. Çĕршывăн пĕрлĕхĕпе хăвачĕ вара вырăнсенче – регионсенче, хуласемпе поселоксенче никĕсленет. Çĕмĕрле – пирĕн пĕрлехи çурт. Шансах тăратăп, унта эпир малашне те туслă, килĕштерсе пурăнăпăр, ăна пĕрле лайăхлатăпăр, пĕр-пĕрне пулăшса пырăпăр.

Сире, хаклă çĕмĕрлесем, чĕререн çирĕп сывлăх, телейпе савăнăç, ыранхи куна шанса пурăнма, кашни килте, кашни çемьере ăнăçу сунатăп.

**Çĕмĕрле хула администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан О.Ф. КУРМАЕВА.**

**Хаклă çĕмĕрлесем!**
**Çĕмĕрле районĕн администрацийĕ сире уявпа – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕпе саламлать!**

Çак кун пире яланах темле йывăрлăхсемпе нушасем те пире – Раççей халăхне уйăрма пултарайманни çинчен аса илтерсе тăрĕ. Эпир хамăра пĕр халăх пек, пĕр çĕр çинче пурăнакансем пек туйма тивĕç.

Паян килĕшӳ, пĕрлĕх тата пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлени çĕршыва, республикăна, района пĕр тикĕс тата динамикăллă аталантарма пыма кирлĕ тĕп услови пулса тăраççĕ. Çакă – аркатма мар, çĕннине тума кирлĕ пĕртен-пĕр çул.

Сире уяв кăмăлĕ, палăртнине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме, ыра ĕççем тата пурнăç çулĕ çинче шанчăклă туссем сунатпăр. Пирĕн ачасемпе мăнуксем мирлĕ тӳпе айĕнче ӳсчĕр, кашни кун ыра шанăçсемпе çĕнĕ çитĕнӳсем илсе килтĕр.

**Çĕмĕрле район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Л.Г. РАФИНОВ.**

## Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ

**Чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕ – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ. Ăна Чăваш Енре те анлăн паллă тăваççĕ – республикăри пĕтĕм халăх уявĕ пек.**

Хальхи вăхăтра Чăваш Енре 97 наци тата 9 халăх ушкăнĕн представителĕсем пурăнаççĕ, 24 наци-культура пĕрлешĕвĕ ĕçлет. Вĕсем нацисем хушшинчи килĕшĕве çирĕплетес ĕçе пысăк тӳпе хываççĕ.

Ку уяв патшалăх вăйĕ халăх пĕрлĕхĕнче пулнине аса илтерет. Унăн историйĕ хăйне евĕрлĕ те кăсăклă. 1612 çулхи чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕнче халăх ополченийĕн салтакĕсем Кузьма Минин тата Дмитрий Пожарский ертсе пынипе Китай-хулана штурмласа илнĕ, Мускава Польша интервенчĕсенчен хăтарнă. Çапла майпа вĕсем паттăрлăх çеç мар, халăх хăй епле тымартан пулса кайнине, хăш тĕне ĕненнине тата обществăра мĕнле вырăн йышăннине пăхмасăр пĕр шухăшлă иккенне кăтартнă.

1649 çулта Алексей Михайлович патша хушăвĕпе килĕшӳллĕн Турă Амăшĕн Хусан турăшĕн кунне (кивĕ стильпе юпа уйăхĕн 22-мĕшĕ) патшалăх уявĕ тесе пĕлтернĕ. Унсăр пуçне XX ĕмĕр пуçламăшĕнче çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче (кивĕ стильпе) Кузьма Минина асăннă, ăна I Петĕр «Тăван çĕршывăн çăлавçи» тенĕ.

Чӳк уйăхĕн 4-мĕшне уяв кунĕ тăвас шухăша Раççейĕн Тĕнсем хушшинчи Канашĕ 2004 çулхи авăн уйăхĕнче палăртнă. Ăна РФ Патшалăх Думин ĕçлев тата социаллă политика Канашĕ те ырланă. Ку шухăшпа Мускав тата пĕтĕм Руç Патриархĕ II Алексий те килĕшнĕ. 2004 çулхи раштав уйăхĕн 16-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думи федерацин «Çар мухтавĕн кунĕсем çинчен» саккунне улшăнусем кĕртнĕ. Вĕсенчен пĕринпе килĕшӳллĕн чӳк уйăхĕн 4-мĕшне Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ тесе йышăннă.

**И. БЕЛОВА.**

## Чи матуррисене чысларĕç



**Октябрĕн 30-мĕшĕнче Турханти культурăпа сывлăха çирĕплетекен центрта Ял хуçалăхĕнче тата апатçимĕç тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунне халалланă мероприяти иртрĕ. Ку вăл ял хуçалăхĕнче тата тирпейлекен промышленноçра профессиллĕ вăй хуракансен, çавăн пекех ялта пурăнакан, çĕр çинче тăрăшакан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен, пахча çимĕç çитĕнтерекен, хула çыннисене улма-çырлапа, сĕт-çупа тивĕçтерекенсен уявĕ.**

*Тĕплĕнрех 12-мĕш страницăра вулăр.*

**Паянхи номерте:**

**ТВ ПРОГРАММА**



**Ноябрĕн 10-мĕшĕ – Милици кунĕ. Кăнтăрла та, çĕрле те постра.**

2-4 стр.

**Суд приставĕсен служби 145 çулта!**




5 стр.

**Пуласлăх – çамрăксенче!**



**“Ăнăçу территорийĕ” активлисене, хăюллисене, ĕçлисене пĕрлештерчĕ.**

6-11 стр.

**Районта Ял хуçалăх ĕçченĕсен кунне паллă турĕç.**



12 стр.

**Çын тата саккун.**
***<u>Çĕре харпăр хăй тĕллĕн тытса илнĕшĕн ответ тыттараççĕ.</u>***
**Росреестр специалисчĕ панă интервью.**

13 стр.



**<u>Условнăй айăплав:</u> тӳрленме шанăç пур.**

14 стр.

***Сывлăх.***
**Грипран сыхланăр. Китай кружкисем хăрушă!**

15 стр.

● *Ноябрĕн 10-мĕшĕ – Милици кунĕ*





**Л. ДМИТРИЕВА,**
**Çĕмĕрле хулипе Çĕмĕрле районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн начальникĕн çумĕ.**

**Уважаемые сотрудники и ветераны правоохранительных органов!**
**Поздравляю вас с профессиональным праздником – Днем милиции!**

Пожалуй, нет другой профессии, которая требовала бы от человека столько выдержки, мужества, самоотдачи, готовности прийти на помощь к тем, кто нуждается в защите.

Сотрудники милиции почти всегда работают в усиленном режиме: «служба – дни и ночи». В сложных условиях, за невысокую по сегодняшним меркам заработную плату вы делаете все возможное, чтобы мы могли спокойно жить, чтобы наши дети были в безопасности.

Искренне поздравляю ветеранов МВД, честно выполнивших свой служебный долг, которые являются примером для молодых сотрудников. Особые слова приветствия и поддержки тем, кто будет находиться в праздничный день на посту.

Хочется выразить благодарность за ваш труд и пожелать более ответственно и грамотно подходить к решению служебных задач. Чем лучше работает милиция, тем меньше совершается преступлений и тем спокойнее живется горожанам.

От всего сердца благодарю вас за достойную службу! Желаю всем сотрудникам органов внутренних дел дальнейшей успешной работы, крепкого здоровья, мира и благополучия в семьях, верных друзей и удачи!

**И.о. главы администрации города Шумерли**
**О.Ф. КУРМАЕВА.**

# МИЛИЦИРЕН - ПОЛИЦИ ПАТНЕ

Юлашки çулсенче çирĕпленнĕ демократи режимĕллĕ патшалăхсенче полици ĕçне реформăлас, полицейскисене хатĕрлемелли системăна хальхи шая куçарас туртăм палăрать. Реформа результачĕ – çак çĕршывсенче преступленисен шайĕ чакни, йĕрке хуралçисене пурлăх тĕлĕшĕнчен тивĕçтересси лайăхланни, полици службин сумĕ ӳсни тата халăх полицейски тумне тăхăннă çынсене ытларах хисеплени. Хăйĕн право йĕркине сыхлакан органĕсене реформăлас енĕпе Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерстви те юлмасть.

Шалти ĕçсен органĕсен тытăмĕнчи подразделенисене тăтăшах пĕр тытăмран теприне тăтăшах куçарни кадрсем улшăнса тăрасси, профессионалсен сыпăкĕ чухăлланасси, халăх право йĕркине сыхлакан органсене сахалрах шанни патне илсе пынă. Право йĕркине сыхлакан органсене тупикран илсе тухма Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Д. Медведев пуçарнипе хатĕрленĕ "Полици çинчен" федераллă саккун пулăшмалла. Унăн проектне пĕтĕм халăхпа сӳтсе явма "Российская газета" хаçатра 2010 çулхи августăн 7-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă. Саккун проектĕнче 11 сыпăк, 52 статья. Саккун проектне сӳтсе явнă тапхăрта çĕршывра полици институтне вăя кĕртесси пирки хăйсен шухăшне 20 пин ытла çын пĕлтернĕ.

2010 çулхи августăн 6-мĕшĕнчех Кремльте шалти ĕçсен органĕсене реформăлас пирки Д. Медведев çапла каларĕ: "Ман шутпа, милицине унăн малтанхи ятне тавăрса пама тата малашне право йĕркине сыхлакан органсене полици тесе калама вăхăт çитрĕ". Çĕршыв пуçлăхĕ каланă тăрăх, милици малтанхи пек халăхăн, "пакунлă дружинниксенчен" тăракан рабочисемпе хресченсен милицийĕ мар ĕнтĕ. 1917 çулта вăл çавăн пек пулнă. Хальхи вăхăтра право йĕркине профессиллĕ шайра сыхлать. Çавăнпа та унăн ятне полици тесе улăштарни саккунлă япала, çĕршыври право йĕркине сыхлакан органсен системине малалла аталантарса тĕнчери полици пĕрлĕхне кĕмелли тĕрĕс утăм пулса тăрать.

"Полици" термин грексен "политейя" ("полис" – хула) сăмахĕнчен пулса кайнă, "хула управи" тенине пĕлтернĕ. Пятигорскра 2010 çулхи августăн 19-мĕшĕнче ирттернĕ канашлура Д. Медведев каланă пек, милицие "полици" ят пани шалти ĕçсен органĕсен çĕнĕ социаллă модельне çирĕплетнин символĕ пулса тăрать. Вăл обществăри йĕркелĕхе тивĕçлĕ шайра тивĕçтерме, граждансен прависемпе ирĕклĕхĕсене çăннипе хӳтĕлеме, шалти ĕçсен органĕсене тивĕçлĕ мар функцисенчен хăтарма, полици сотрудникĕсен полномочийĕсен калăпăшне уçăмлă палăртма кирлĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн халĕ граждансем полици ĕçĕ пирки мĕн шутлани унăн ĕçне официаллă хак памалли тĕп критерисенчен пĕри пулса тăрать.

Пятигорскри канашлăва хутшăннисене çĕршыв пуçлăхĕ шантарнă тăрăх, çывăх вăхăтра, сӳтсе явма тăратнă "Полици çинчен" саккун проекчĕсĕр пуçне, тата икĕ федераллă право актне хатĕрлеççĕ – "Полици органĕсенче шалти службăна ирттересси" федераллă саккун тата Президентăн "Полици тытăмĕ çинчен" Указĕ. Саккунра йĕркелĕх хуралçисене социаллă хӳтĕлемелли мерăсене палăртаççĕ, указ вара Раççейри полици органĕсен тытăмне çирĕплетет.

"Полици çинчен" саккун проектĕнче лицензисемпе ирĕксем парассине подразделенисен функцийĕнчен кăларма сĕнеççĕ. Вĕсен функцийĕ хурал, детектив ĕç-хĕлĕнчи тата хĕç-пăшалпа усă курас енĕпе контроллесси пулса тăрать. РФ Шалти ĕçсен министерстви тата РФ Прокуратури çумĕнчи следстви комитечĕсен никĕсĕ çинче хăй тĕллĕн ĕçлекен следстви органне туса хума сĕнеççĕ. Малашне ГИБДД техника тĕрĕслевĕ ирттерекен органсене тата водительсене контроллесе тăрĕ. Техника тĕрĕслевне йĕркелесе ирттерессине муниципалитет органĕсен аллине пама сĕнеççĕ. ГИБДДра транспорт хатĕрĕсене тытса пымалли право илмелли квалификаци экзаменĕсене йышăнакан тата водитель удостоверенине паракан организацисене (автошкулсене) контроллесси сыхланса юлать. Çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен инспекторсен ĕçĕнче палăрмалла улшăнусем пулса иртеççĕ. Вĕсем реабилитаци ĕçĕ тата восстановительное правосудие текен технологисене вĕренĕç.



Полицейскисен професси квалификацине тăтăшах ӳстернĕ чухне этем прависене сыхлассипе, полици службин тĕнчери стандарчĕсене пăхăнассипе, психологипе, юриспруденципе, службăри хутшăну этикипе çыхăннă темăсем тĕп вырăнта пулаççĕ. Аттестаци ирттермелли процедурăра профессипе психологи тестированийĕ, полиграфпа тĕрĕслесси, кадрсен, харпăр хăй хăрушсăрлăхĕн службисем сотрудниксем хăйсене службăра тата йăлара мĕнле тытнине тĕрĕслесе тăрĕç.

Раççей Президенчĕн Д. Медведевăн шалти ĕçсен органĕсене реформăламалли пуçарăвĕ граждансем полицейскисенче хăйсен прависемпе ирĕклĕхĕсене çăннипе сыхлакансене курасси патне илсе çитерессе, кашни полицейски шанчăклă социаллă гаранти илессе шанас килет.

Милици тытăмĕнчен полици тытăмĕ çине куçасси 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçленмелле. Çак вăхăт тĕлне хамăрăн шалти ĕçсен пайĕнче пирĕн личнăй составăн 20 процентчĕ чухлĕ штат резервне хатĕрлемелле. Раççей Милицийĕн кунĕ тĕлне пирĕн сотрудниксен йышĕ 40 çын çитмест. Патрульпе пост службин ротинчи 50 сотрудникран 17-шне чакарнă. Çавăн пекех милицин участокри уполномоченнăйĕсене, çул çитмен çамрăксен ĕçĕсемпе ĕçлекен сотрудниксене, дознавательсене, милиционер-конвоирсене, офицерсен составĕнчи должноçсене чакарнă. Милици сотрудникĕсем халĕ икĕ хут йывăрлăхпа ĕçлеççĕ, çав вăхăтрах ĕç укçи пĕчĕк, социаллă гарантисем çук.

Çĕмĕрле хулипе Çĕмĕрле районĕнчи шалти ĕçсен пайне пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ милици подполковникĕ С.В. Тарасов ертсе пырать. Уншăн чи кирли – шалти ĕçсен органĕсенче пысăк профессиллĕ, чи кăткăс оперативлă-служба тата службăпа çар задачисене те татса пама пултаракан, çапла майпа çынсем хăйсене преступленисенчен хӳтĕлеме шаннине тӳрре кăларакан çынсем ĕçлеччĕр тесе мĕн кирлине пурне те тăвасси. Хăйĕн служба тивĕçĕсене вăл чыслăн пурнăçлать. Вăл Раççей милицийĕн чăн-чăн офицерĕ, преступленисене уçса памалли, документсем хатĕрлемелли хальхи методикăна, инновациллĕ аспектсене лайăх пĕлет.

Шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлекенсем хушшинче криминаллă милици начальникĕ милици подполковникĕ И.М. Губанов пысăк профессионализмпа, этемлĕхпе палăрса тăрать, следстви уйрăмĕн начальникĕ юстици подполковникĕ В.П. Ануфриев – интеллигентлăхпа, спортпа туслă пулнипе, штаб начальникĕ милици подполковникĕ С.Н. Коротин – толерантлăхпа тата культурăпа, обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн начальникĕ милици майорĕ Н.А. Зологин – право пĕлĕвĕсемпе тата принциплă пулнипе, пай начальникĕн тылпа тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен çумĕ милици майорĕ О.В. Пиняев – нумай енлĕ пултарулăхĕпе, ОУУМ начальникĕ милици подполковникĕ С.А. Федулов – оперативлă пулнипе тата служба ыйтăвĕсене татса панă чухне тимлĕ пулнипе, дознани отделенийĕн начальникĕ милици майорĕ С.Г. Шуркин – тӳрĕ кăмăллă пулнипе, уголовнăй шырав пайĕн начальникĕ милици майорĕ А.А. Губанов – çирĕп ыйтнипе тата интеллигентлă пулнипе, çул çитменнисен ĕçĕсен пайĕн начальникĕ милици капитанĕ Н.Н. Чурашова – ырă кăмăллă тата типтерлĕ пулнипе, ГИБДД управленийĕн МЭО патшалăх инспекторĕ милици подполковникĕ Ю.А. Епифанов – служба ыйтăвĕсене ĕçлĕ татса панипе, кадрсен пайĕн инспекторĕ милици капитанĕ Р.В. Заикин – лайăх воспитани илнипе тата çирĕп ыйтнипе. Пай бухгалтерне В.А. Адрова та тав сăмахĕсене, хисепе тивĕçлĕ. Шалти ĕçсен пайĕнче вăл 30 çул ытла ĕçлет ĕнтĕ.

Ветерансене уйрăммăн тав сăмахĕ калас килет, мĕншĕн тесен паянхи çитĕнӳсен никĕсĕнче – вĕсен пуян опычĕ. Çулĕсене тата сывлăхне пăхмасăр кирек хăш вăхăтра та пулăшма хатĕр пулни, Тăван çĕршыва, преступноçпа кĕрешес ĕçе чунтан парăнни – çамрăк сотрудниксемшĕн чи лайăх тĕслĕх.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, мирлĕ пурнăç тата ăнăçу сунатăп, Раççей Милицийĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

# Паянхи «гаишник». Мĕнлерех-ши вăл?



Паянхи ГИБДД ĕçченĕ – пур енчен те универсал. Вăл çул-йĕр правилисене лайăх пĕлнисĕр пуçне психолог та, консультант та, çул çинчи пĕрремĕш арбитр та пулса тăрать. Унăн ыйтусене хăй тĕллĕн хăвăрт татса памалла, автомобиль тытăмне лайăх ăнланмалла, ăна асводительтен кая мар тытса пыма пĕлмелле, компьютер пĕлĕвĕсем пулмалла, çав хушăрах аварире инкек тӳснисене пулăшма пĕлмелле. Гаишник профессийĕ хăрушлăхсăр маррине те манма кирлĕ мар – вăл кирек хăш самантра та саккуна пăсаканпа пĕччен тăрса юлма пултарать, вĕсем вара хĕç-пăшаллă та пулма пултараççĕ. ГИБДД ĕçченĕсем çак задачăсене лайăх пурнăçланине палăртмалла. Анчах та çакă лăплантарма пултараймасть, пачах урăхла – татах та йывăртарах çĕнĕ задачăсем лартма хистет.

ГИБДД ĕçченĕсем умĕнче чылай çул хушши тăракан тĕп задача – çул-йĕр инкекĕсем ӳсестрен сыхланасси. 2010 çулхи иртнĕ тапхăрта хулапа район территорийĕнче 32 çул-йĕр инкекне регистрациленĕ, вĕсенче 10 çын вилнĕ, 42 çын аманнă. Техника сиенленнĕ çул-йĕр инкекĕ 215 шутланнă. Çул-йĕр инкекĕсем ӳсни курăнать, çакă вара питех те пăшăрхантарать.

Раççейре кашни кун тенĕ пекех çакăн пек инкексенче çынсем хĕн кураççĕ. Аварисене пурнăçпа тинпаллашакан, айăпсăр ачасем те лекни хăрушă. Çул-йĕр инкекĕсене тата ачасемпе çамрăксем инкеке лекессине сирсе ярас тĕллевпе пĕрре çеç мар рейд ирттернĕ. ГИБДД ятĕнчен çул-йĕр хăрушсăрлăхне пропагандăлас енĕпе пĕрле ĕçленĕшĕн вĕрентекенсемпе çамрăк çул-йĕр инспекторĕсене тав тăватпăр, малашне те пĕрле ĕçлессе шанатпăр.

Кĕске пĕтĕмлетӳсем тунă хыççăн çак паллă пулчĕ: çул çинче çӳресси хăрушлăхсăр пултăр тесен питех те нумай ĕçлемелле. ГИБДД ĕçĕнче 2010 çулхи çитес тапхăрта тĕп приоритетлă енсене те палăртнă. Ку вăл – урампа çул-йĕр сечĕсем мĕнле лару-тăрура пулнине çирĕпрех тĕрĕслесси, çул çинче çӳрессин хăрушсăрлăхне пропагандăланă çĕрте организацисемпе, шкулсемпе, шкул çулне çитменнисен учрежденийĕсемпе тачăрах çыхăнса ĕçлесси.

Çул юхăмĕн хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн тĕп вăйĕ – çул çинче патруллекен служба инспекторĕсем. Вĕсем çине кулленхи йывăр ĕç тиенет. Сивĕре те, пăчăра та, çумăрта та ДПС инспекторĕсем çул çинче службăра тăраççĕ. Çынсем паллани енчен вĕсем хулапа районти пĕрремĕш çынсемпе ăмăртма пултараççĕ. Вĕсене пурте пĕлеççĕ-çке! ДПС инспекторĕсем ГИБДД сăн-сăпачĕ пулса тăраççĕ, вĕсене кура ГАИн пĕтĕмĕшле ĕçĕ çинчен калаçаççĕ.

Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн паянхи составĕ – мобиллĕ, çӳллĕ шайри профессионализмлă коллектив. Вăл хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес енĕпе пысăк задачăсем татса пама пултарать.

Пĕрле ĕçлекенсене професси уявĕпе саламланă май пур сотрудниксене те, ГИБДД службин ветеранĕсене те телей, ырлăх-сывлăх, палăртнă тĕллевсене пурнăçлама ăнăçу сунатăп.

**Ю. ЕГОРОВ,**
Çĕмĕрле хулипе Çĕмĕрле районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн ГИБДД отделенийĕн пуçлăхĕ.

# СЫВЛĂХ ПУЛТĂР!



## Турана мĕнле суйламалла?



Пурин те сывă, çăра çÿçлĕ пулас килет. Пуртре çаканшăн хайсем пĕлнĕ пек тăрăшаççĕ: пĕрисем асаннесен рецепчĕсемпе çÿçе маска сĕреççĕ, теприсем салона каяççĕ, виççĕмĕшĕсем вара рекламăра кăтартнă шампуньсемпе çăвăнаççĕ. Кирек мĕнле пулсан та шанчăклă тус пуç тури шутланать. Шел пулин те, ăна пурте хисеплесех каймаççĕ. Çав хушăрах тĕрĕс суйласа илнĕ тура чылай йывăрлăхран хăтарма пултарать.

Паянхи çÿлĕксем çинче чылай тĕрлĕ тура, щетка тавраш курма пулать. Ассортимент, паллах, куçа савăнтарать. Анчах та сиреншĕн юрăхлă пĕртенпĕр турана мĕнле суйласа илмелле-ха?

**Классикăллă тура.** Вăл пур чухне те кирлĕ тура тесе шутланать. Çук çав! Вăл сывăрма выртас умĕн турамалли анчах. Вăл натураллă, искусственнăй, хутăш шăртлă пулать. Натуралли, паллах, лайăхрах, мĕншĕн тесен вăл çÿçпе пĕр пек «строительство материалĕнчен» тăрать.

**Йываç тура.** Ăна чăннипех ĕçчен теме пулать: кашни кун туранма юрăхлă, электризациленмест, ÿте те аркатмасть. Маскăсемпе укладка хатĕрĕсем сĕрме те юрăхлă, мĕншĕн тесен йываç хими составĕсемпе реакцине кĕмест.

**Пластмассăран тунă турасем.** Пластмас турапа час-часах усă курсан çÿç татăлма, икĕ вĕçленме пултарать. Енчен те сире питех те пластмассăран тунă турасем килĕшеççĕ пулсан, хĕрхенекен альтернатива суйласа илĕр – силиконран е карбонран тунине. Пĕрремĕшĕсем çÿç каснă е сăрланă чух юрăхлă, карбонран туни вара çÿçе çÿллĕрех тураса лартма кирлĕ.

**Металлран тунă турасем** питех те килĕшрĕç. Хĕвел çинче йăлкăшса тăраççĕ, тĕсĕсем те кĕмĕлтен ылтăн таран. Анчах кун пек турасемпе час-часах усă курма сĕнмеççĕ, мĕншĕн тесен металл ÿте ыраттарать, çавна май çÿç вăйсăрланма пултарать.

Лавккара чăтаймасăр **брашинг** илтĕм – ку вăл цилиндр евĕрлĕ щетка, корпусĕ çинче шăтăксем пур. Ăна çÿçе фенпа типĕтнĕ чух усă кураççĕ, кĕске çÿçе вăл кирлĕ форма пама пултарать.

Çакна та ас тумалла: арсеналта 2 тураран кая мар пулмалла, вĕсем тĕрлĕ формăллă тата пĕлтерĕшлĕ пулчăр. Хĕрăмсен арçынсен вĕтĕ турисемпе усă курмалла мар: вĕсем çÿçе арктинесăр пуçне ним усси те кÿмĕç. Турасемпе щеткăсене тасатсах тăрăр, уйăхра пĕрре те пулин çума ан манăр. Сунă хыççăн типĕтнĕ çÿçе сайра шăллă турапа турăр, «хÿре» е «пайăрка» тăвас тесен вара шăлĕсем час-часах вырнаçнă турапа усă курăр.

**Ю. АГАФОНОВА.**

# ГРИПП ЙЫВĂРЛАННИПЕ ХĂРУШĂ







**Грипп – çивĕч иртекен инфекциллĕ вирус чирĕ. Вирус сывлăш урлă сарăлать: сунасланă, ÿсĕрнĕ, калаçнă чухне. Инфекци саракан çăл куççем чирлĕ çынсем пулса тăраççĕ. Вирус чи малтан сывлав органĕсене, нерв, чĕрепе юн тымарĕсен, вар-хырăм системисене сиенлет. Чир сезонсемпе вăй илет. Ытларлах чухне çынсем гриппа сивĕ çанталăкра чирлеççĕ, вăл чи малтан ачасем, ватă, халсăр çынсем, вăрах вăхăт чирлекенсем хушшинче хăвăрт сарăлать. Грипп вирусĕсем 3 йышши пулаççĕ: А,В, С. Анчах вĕсен тĕсĕсем питĕ йышлă, тăтăшах ÿссе пыраççĕ, чир паллисем те улшăнаççĕ.**

Грипп чирĕ авалтанпах паллă. Тĕнчери мĕн пур çĕршывсене саварса илнĕ çĕршер эпидемипе темиçе пандеми пулни паллă.

Уйрăмах пысăк пандемисем 1889–1890, 1918–1920, 1968–1969 çулсенче пулнă, çынсем уйрăмах нумай вилнипе палăрнă. Эпидемисем вăхăтĕнче халăхăн 50 проценчĕ ытла чирлет.

Грипп хăвăрт пуçланать: ÿт температури 39–40 градус таран хăпарать, шăнтать, сыпăсем, мышцăсем, пуç ыратаççĕ. Ун хыççăн сунас пуçланать, сасă хăйăлти пулать, пыр хĕрелет, куççуль юхать, типĕ ÿслĕк асаплантарать. Пысăк температура 3–6 кунхушши тытăнса тăрать.

Грипп кăткăсланни хушшинче малти вырăнта пневмони тăрать. Вăл чир пуçлансан малтанхи кунсенче тата чир хыççăн 5 кун хушшинче аталанать. Ытти кăткăсланусенчен гайморита, отита, ларингита, бронхита палăртмалла. Чи йывăррисем менингоэнцифалит, инфекциллĕ психозсем, миокардит пулса тăраççĕ.

Грипа врачăн ытларах чухне килте сиплет. Чир йывăрлансан госпитализациллеççĕ. Чирлĕ çынна уйрăм пÿлĕмре вырттармалла е вăл выртакан кравате ширмăпа картламалла. Çемьен мĕн пур членĕсен хÿтĕлев маскисем тăхăнса çÿремелле, пÿлĕмсене час-часах уçăлтармалла, йĕпетсе тасатмалла, вырăн хатĕрĕсене улăштарсах тăмалла.

Грипп вăхăтĕнче çăмăл апатсенчен тăракан диета пулмалла – аш тата пулă катлечĕсем, бульонсем, тăпăрч, пахча çимĕç, улма-çырла. Ытларах ĕçме тăрăшмалла – вĕри сĕт, пылпа, лимонпа, хăмла çырлипе чей, улма-çырла сĕткенĕсем.

Грипп чухне прогноз ытларах чухне лайăх. Ватă тата халсăр çынсен вăл йывăррăн иртме, кăткăсланма пултарать. Вăтамран 7 куна тăсăлать.

Çыннăн грипран иммунитет пулмасть. Тÿссе иртернĕ грипп хыççăн пулакан иммунитет нумая пымасть: А ушкăнри грипп хыççăн – 1 – 2 çул, В ушкăнри грипп хыççăн – 3–5 çул.

Грипран сыхланас тесен унпа чирлĕ çынсене маларах тупса палăртмалла, вĕсене сывă çынсенчен уйăрмалла, хÿтĕлĕх маскисем çыхса çÿремелле, массăллă мероприятисем сахалрах ирттермелле, уйрăмах ачасемпе, шăмшака пиçĕхтермелле. Ятарлă профилактика грипп вакцинипе иммунитета çирĕплетни пулса тăрать. Ăна кашни çулах кĕркуннехи-хĕллехи тапхăрта планпа туса ирттереççĕ. Прививка тăвиччен врач тĕрĕслемелле. Инактивизациленĕ грипп вакцинацийĕ ирттернин хÿтлĕх активлăхĕ пысăк.

Вакцинăпа профилактика туни гриппа чирлессине самаях чакарать – 1,5 – 4 хут, чир йывăр ирттессине те палăрмаллах чакарать.

Сывлăхлă пулăр!

**Н. ШЕСТАКОВА,**
Çĕмĕрле хулин больницин пĕтĕмĕшле практика врачĕ.

# ÇĂЛĂНĂÇ - ВАКЦИНĂРА



Грипп – сывлăшпа сурчăк урлă куçакан вирус инфекцийĕ. Чирлекен çыннăн пуç ыратать, ăна шăнтать, çын вăйсăрланать, пĕтĕм кĕлетке ыратнă пек туйăнать.

Грипп çÿлти сывлав çулĕсене пырса тивет. 3 çула çитмен ачасен, çул çитмен çамрăксен, 60-тан иртнисен, соматика чирĕсемпе час-часах чирлекенсен çак чир пушшех те йывăррăн иртет, мĕншĕн тесен вĕсен çак тапхăрта вируспа кĕрешмелли иммунитет вайсăрланать.

Грипăн тĕп хăрушлăхĕ – сывлав органĕсенче (пневмони, бронхит), чĕрепе юн тымарĕсен системинче ун хыççăнхи йывăрлăхсем аталанни. Вĕсем час-часах инкек патне илсе çитереççĕ, хăш чухне çын вилме те пултарать.

Çакна асра тытмалла: грипа антибиотиксемпе сиплемеççĕ, вĕсем ун хыççăнхи йывăрлăхсем çине анчах витĕм кÿреççĕ. Чылай çулхи практика çакна кăтартать: профилактика мелĕсенчен чи вăйли – эпедеми сезонĕ пуçланиччен вакцинаци тăваси. Грипп вирусĕсем улшăнсах тăраççĕ, çавăнпа та Пĕтĕм тĕнчери сывлăха сыхлакан организаци сĕнĕвĕсене шута илсе вакцина составне уйрăм сезона шута илсе улăштараççĕ. Грипран кашни çулах прививка тумалла, мĕншĕн тесен вакцина организма чылай вăхăт хÿтĕлеме пултараймасть, пĕлтĕрхи прививка тепĕр сезонри грипăн ытти вирусĕсенчен хÿтĕлеймест.

Приоритетлă наци проекчĕ шучĕпе сентябрь уйăхĕнче Çĕмĕрле хулипе Çĕмĕрле районĕнче ачасене грипа хирĕç иммунизацилеме пуçларĕç. Прививкăсене «Гриппол» вакцинăпа тăваççĕ. Ăна А тата В йышши грипăн тасатнă вирусĕсенчен хатĕрленĕ, ют хушмасем хушман. Ытти грипла кĕрешекен вакцинăсемпе танлаштарсан, пысăк эффективлăхпа палăрса тăрать. Вакцинăна организм лайăх тÿссе ирттерет, грипран çÿллĕ шайри иммунитет йĕркеленет, вакцинăна кĕртнĕ полиоксидоний иммуномодулятор вара иммунитета ÿстерет, организма ытти инфекцисемпе кĕрешме çирĕплетет.

Вакцинаци хыççăн иммунитет 8-12 кун хушшинче йĕркеленет, 12 уйăх таран упранать. Вакцинаци уйрăмах час-часах чирлекенсене кирлĕ. Температура 37 градусран ытларах пулсан, чăх белокĕ çине е маларах тунă прививкăсем çине аллерги пулнă пулсан, прививка тума юрамасть. «Гриппол» вакцинăна ытти вакцинăсемпе пĕр вăхăтра усă курма юрать, анчах та препаратсене тĕрлĕ вырăна, тĕрлĕ шприцсемпе ямалла.

Паянхи куна гриппран вакцинаци туни – грипран сыхланмалли чи шанчăклă, эффективлă мел. Вакцинăпа вăхăтра усă курни 80-92 процент таран хÿтлĕх парать.

**В. КАПКОВА,**
ача-пăча больницин участок педиатрĕ.

# Усăллă пилĕк çимĕç

**Пирĕн хырăмлăхсем – ырми-канми ĕçченсем. Вĕсем пĕр чарăнми апат-çимĕçе ирĕлтереççĕ, тепĕр чухне сиенлисене те. Хырăмлăхауншăн усăллă тата кăмăллă çимĕçсемпе савăнтарма та вăхăт.**

Кун пекçимĕçсем сахал мар. Вĕсем вар-хырăмшăн тата пыршăлăхшăн усăллă, вĕсен ĕçне лайăхлатаççĕ.

Пĕрремĕш вырăнта тивĕçлипех **имбирь** тăрать. Вăл апат ирĕлтерекен ферментсем туса кăларассине пулăшать. Апата имбирь хушни унăн тутине лайăхлатать кăна мар, апат ирĕлессине те палăрмаллах лайăхлатать.

**Фенхельре** анетол текен япала пур. Вăл та хырăмлăх сĕткенне кăларассине лайăхлатать. Унсăр пуçне фенхельре аспарагин кислоти пур. Вăл газсем пулассине чарать.

**Натуральнăй йогуртсем.** Вĕсен тытăмĕнче пробиотиксем пур. Вĕсем организмра лактоза пулнишĕн яваплă, сиенлĕ бактерисене ĕрчеме чараççĕ, апат ирĕлнин функцине лайăхлатаççĕ.

**Пĕтнĕк** (мята перечная). Унпа вар-хырăм пăсăлсан, ăш хытсан, кăкăр хĕртсен, метеоризм чухне усă кураççĕ. Вăл çавăн пекех аппетита лайăхлатать, хăсас килнине тата пуç ыратнине сиплет. Пĕтнĕк вĕретнĕ шыв – сиплĕ тата ĕçме кăмăллă шĕвек. Вăл хырăмлăха ĕçлеме пулăшать.

Юлашкинчен пунриншĕн те паллă **лавр çулçине** палăртмалла. Вăл апат ирĕлессине лайăхлатать, унсăр пуçне, организма токсинсенчен тасатать.

## Витаминран, минералтан чухăн апат çини мĕн патне илсе пырать?

Вăрах вăхăт çакнашкал апатлансан организма пысăк пĕлтерĕшлĕ микроэлементсем çитми пулаççĕ. Акă, тĕслĕхрен, ача чухне кальци çитмесен рахит аталанать, аслăрах çулсенче – остеопороз. Хĕрарăмсем мĕн чухлĕ аслăрах, шăмă патраклануси çавăн чухлĕ пысăкрах. Нумаях пулмасть кăна-ха остеопороз аталаннин пĕртен-пĕр сăлтавĕ çулсем иртнĕ май шăмă масси çухални тесе шухăшлатчĕç. Паян ăсчахсем çакнашкал шухăша хирĕçлеççĕ, остеопороз ача çулĕсенчех аталанма пуçлать теççĕ. Чир пулĕ е çук – çакă çамрăк чухне, 18 çула çитиччен, мĕн чухлĕ шăмă «пухăннинчен» килет.

Остеопорозран сыхланмашкăн кальципе тата магнипе пуян апат çимелле. Магни пыршăлăхра, каярах тата шăмăсенче кальцие йышăнассине çăмăллатать. Хăш-пĕр ăсчах шухăшланă тăрăх остеопорозран сыхланмашкăн тепĕр чухне магни кальципен те пысăкрах пĕлтерĕшлĕ. 15 çула çитмен ачасене магнипе çитĕннисене кирлинчен ытларах тивĕçтермелле (1 килограмм виçе пуçне 6 милиграма çити). Çакна шăм-шак хăвăрт ÿснипе çыхăнтармалла. Çак элемент вир кĕрпинче, сĕлĕ хăрпăкĕнче, бананра, купăстара, хура тул кĕрпинче, кавăн тата хĕвел çаврăнăш вăррине, тутлă пăрăçра, сырта, пăрçара нумай.

# Китай кружкисем ХĂРУШĂ!



Потребительсен прависене тата этем тăнăçлăхне хÿтĕлекен сферăри федераллă надзор служби Европăри апат-çимĕçпе вылăх апачĕсен пахалăхĕ пирки хăвăрт пĕлтерекен системăран килнĕ информаципе паллаштарать. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, Австрире ачасем валли кăларнă 225 мл кĕрекен икĕ аврăллă, "Top Star" хупăллă, тĕрлĕ ÿкерчĕкпе илемлетнĕ кружкăсенче миграцилекен бензол шайĕ пысăк пулнине палăртнă. Туса кăларакан – Surpass Frts and Crafts Co. Ltd.Z (Китай), парса тăракан – Testruf Finkauf GmbH (Германи), парти номерĕ – 290409, штрих-код – 4 009977 611819.

**Бензол – хăрушлăхăн 2-мĕш класĕллĕ хими веществи, вăйлă канцероген шутланать. Этем организмне бензол пĕчĕк дозăпа та пулин нумай вăхăт витĕм кÿрсен, çакă сывлăхшăн хăрушă пулма пултарать. Бензолпа вăрах вăхăт наркăмăшланни лейкеми (юн ракĕ) тата анеми (юнри гемоглобин сахалли) сăлтавĕ пулма пултарать.**




Август – сентябрь уйăхĕсенче Раççей Федерацине те кÿрсе килнĕ: икĕ парти 120-шер штук, илекенĕ – "Trust Express" ООО (105094, г. Москва, Семеновская наб., д.3/1, корп. 5); пĕр парти 360 шт, илекенĕ – "Business-Prodinn": 3906118761 (236016, г. Калининград, ул. Судостроительная, 75).

Санитарипе эпидемиологи тĕлĕшĕнчен тĕрĕслесе тăракан таварсен Пĕрлехи санитарипе эпидемиологи тата гигиена требованийĕсемпе килĕшÿллĕн ача-пăча çимĕçĕсене чĕркемелли, ача-пăча ассортиментĕнчи таварсем, вăл шутра савăт-сапа та, кăлармалли материалсемпе изделисене, хак панă чухне хăрушлăхăн 1-мĕш тата 2-мĕш класĕллĕ хими веществисен миграцийĕ пулма пултараймасть.

Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн Çĕмĕрле хулинчи уйрăмĕ суту-илÿ предприятийĕсен ертÿçисемпе уйрăм предпринимательсене вăраха ямасăр çактавар пуррипе çуккине тĕрĕслеме ыйтать. Сывлăхшăн хăрушă тавар пулсан, ăна çийĕнчех суту-илÿрен кăлармалла, 8(8536) 5-29-15, 5-22-71 телефонсемпе пĕлтермелле.

**Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн Çĕмĕрле хулинчи уйрăмĕ.**

# ÇАНТАЛĂК ПРОГНОЗĚ

● Шăматкун ● Вырсарникун ● Тунтикун ● Ытларикун ● Юнкун ● Кĕçнерникун ● Эрнекун

**НОЯБРЬ**

www.pogoda.chuvashia.com даннăйĕсем тăрăх

| | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 | 12 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | çумăр | ăмăр, юр | уяр | ăмăр, çумăр | ăмăр, çумăр | уяр | çумăр çума пултарать |
| К. | -2...+2 | -2...+2 | -3...+1 | -1...+3 | +1...+6 | +5...+10 | -1...+3 |
| Ç. | -3...+1 | -5...-1 | -4...0 | -4...0 | -1...+3 | 0...+2 | -4...0 |

# САЛАМЛАТПАР!

**От души поздравляем уважаемую ПИЛИПЕНКО Людмилу Константиновну, ветерана труда общественного питания, Отличника советской торговли, руководителя столовой ООО «Мечта» С ДНЁМ РОЖДЕНИЯ!**



Желаем Вам, Людмила Константиновна, крепкого здоровья, сил, бодрости и благополучия. Чтобы Ваше предприятие общественного питания продолжало процветать и пользоваться огромным спросом у населения нашего города.

**Коллеги по работе и бывшие работники общепита.**

**Дорогую, любимую маму, бабушку, прабабушку ГОРЗИНУ Полину Ивановну С 80-ЛЕТИЕМ!**



*Мамочка наша родная, любимая,*
*Бабушка славная, незаменимая.*
*С днём рожденья тебя поздравляем.*
*Всяческих благ в твоей жизни желаем,*
*Чтобы ты никогда не болела,*
*Чтобы ты никогда не старела,*
*Чтобы вечно была молодой,*
*Веселой, доброй и нежной такой!*

**Дети, внуки.**

**Дорогую и любимую КЛЕТАРЕВУ Анну Максимовну С ЮБИЛЕЕМ!**



*Улетают года, словно пух тополей,*
*Не грусти, провожая их взглядом.*
*Ведь года - не беда и совсем ерунда,*
*Коль семья и друзья с тобой рядом.*
*Желаем здоровья на долгие годы*
*И чтоб стороной обходили невзгоды,*
*Чтоб радость и счастье не знали разлуки,*
*Чтоб душу согрели дети и внуки.*

**Сестра, крестница, племянник, золовка, Щукины, Гурьяновы.**

**Муж, дети, внуки поздравляют КЛЕТАРЕВУ Анну Максимовну С ЮБИЛЕЕМ!**

Здоровья от души желаем
и с юбилеем поздравляем!



*Сегодня день рожденья у тебя.*
*А сколько лет – значенья не имеет,*
*Так оставайся доброй, как всегда,*
*И сердце никогда пусть не стареет.*

**Дорогих ЕГОРОВА Александра Ильича С ЮБИЛЕЕМ! КЛЕМЕНТЬЕВУ Галину Васильевну С ДНЁМ РОЖДЕНИЯ!**



*Как хочется нам рассказать всему миру*
*О том, что вы есть и какие вы есть.*
*Дорогие, милые, всеми любимые,*
*Слов этих тысячи, всё и не счесть.*
*С вами радостней рассвет,*
*Живите, любимые, долго на свете,*
*Счастливых и долгих вам лет!*

**С добрыми пожеланиями: семьи Клементьевых (г. Санкт-Петербург, г. Шумерля), семья Николаевых (г. Великие Луки), сватья Дружковы (г.Тольятти).**

**ТИМОХИНУ Татьяну Александровну С 55-ЛЕТИЕМ!**



*Молодость – это не возраст, а состояние души!*
*В день юбилея не поздно к новым вершинам спешить!*
*Пусть удается, как прежде, верить в успех и мечту.*
*Жить, доверяя надежде, в людях ценить доброту!*
*Пусть все, кто дорог и близок, дарят любви яркий свет.*
*Самого лучшего в жизни, долгих и радостных лет!*

**Дима, Наташа, Люда и Саша, внучка Настя.**

**От всей души дорогую, любимую жену, маму, бабушку БУБОЧКИНУ Марию Дмитриевну С ЮБИЛЕЕМ!**



*Руки золотые, в прядях серебро,*
*Так тепло от ласкового взгляда…*
*Даришь ты заботу, нежность и добро,*
*Нам с тобою так уютно рядом…*
*Солнышко в душе своей храня,*
*Ты всегда улыбкой нас встречаешь,*
*Всем есть место в сердце у тебя…*
*Крепкого здоровья, радости, тепла,*
*Чтобы ты, родная, счастлива была!*

**Муж, дети, внуки.**

**"Малалла" хаçата**

**редакцире альтернативлă майпа çырăнма май пур. Ăна кирек хăш ĕç кунĕнче те 8.00 сехетрен пуçласа 17.00 сехетчен çырăнма пулать.**

**Подпискăна йĕркелесенех хаçата илме пултаратăр.**

● *Чăвашстат даннăйĕсем тăрăх*

## Экспертсем ӳсĕм пуласса кĕтеççĕ

Октябрĕн 18-24-мĕшĕсенче социаллă пĕлтерĕшлĕ чи кирлĕ таварсенчен (вĕсенчи пысăк хакне правительство чикĕлеме пултарать) пуринчен ытларах тулă хакĕ – 2,1 процент (0,57 тенкĕ) ӳснĕ. Çавăн пекех çак таварсем хакланнă: кишĕр – 1,7 проц. (0,46 тенкĕ), купăста – 1,4 проц. (0,24 тенкĕ), хуратул кĕрпи – 1,2 проц. (0,80 тенкĕ), сухан – 1,2 проц. (0,24 тенкĕ). Услам çу 1,3 проц. (3,05 тенкĕ) йӳнелнĕ.

Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне (сентябрĕн 27-мĕшĕнчипе танлаштарсан) хаксем ӳсни уйрăмах тулла 11,3 проц. (2,27 тенкĕ), хуратула 3,9 проц. (2,54 тенкĕ) пырса тивет. Çулăхĕ 2,5–3,2 процентлă пастеризациленĕ сĕт хакĕ 4,8 проц. (1,42 тенкĕ) ӳснĕ, услам çу – 3,7 проц. (7,98 тенкĕ). Ял хуçалăх таварĕ кăларакансем сĕте августпа танлаштарсан 15,5 процент хаклăрах сута пуçларĕç, çитес вăхăтра сĕте ваккăн сутасси татах та ӳсесси сисĕнет.

Тип çу хакĕ 4,3 проц. ӳснĕ (2,58). Çакă курттăм хаксем ӳснипе çыхăннă. Тип çăвăн ваккăн сутакан хакĕсем пĕтĕм Раççейĕпе те ӳсеççĕ. Çу август пуçламăшĕнче хакланма тытăнни чĕр тавар (хĕвел çаврăнăш) дефицичĕ пулнăран ăна сахалрах кăларнипе çыхăннă.

Шăнтнă вакламан пулă 1,4 проц. хакланнă (0,82 тенкĕ). Экспертсен шучĕпе, ӳсĕм таварсене халăх ытларах ыйтнипе çыхăннă. Çитес вăхăтра пулă тата кăштах хакланма пултарать.

Улма-çырлапа пахча çимĕç продукцийĕнчен ытларах панулми хакланнă – 3,2 проц. (1,40 тенкĕ). Çĕр улмипе сухан чылаях хакланман. Ытти продукци йӳнелнĕ: купăста – 15,1 проц. (3,08 тенкĕ), кишĕр – 4,4 проц. (1,25 тенкĕ).

Çавăн пекех тулă çăнăхĕ йӳнелнĕ – 2,2 проц. (0,41 тенкĕ), сахăр песукĕ – 1,9 проц. (0,70 тенкĕ), сысна какайĕ – 1,7 проц. (3,03 тенкĕ), тасатнă рис – 1,1 проц. (0,44 тенкĕ).

Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне Атăлçи федераллă округри регионсем хушшинче Чăваш Енре купăстапа (17,28 тенкĕ) панулми (44,84 тенкĕ) чи йӳнĕ пулнипе палăрнă. Çĕр улми ыттисемпе танлаштарсан пит хаклах мар (23,29 тенкĕ – 3-мĕш вырăн), кишĕр (26,87 тенкĕ, 3-мĕш вырăн), шăнтнă пулă (58,04 тенкĕ, 3-мĕш вырăн), сысна какайĕ (173,33 тенкĕ, 4-мĕш вырăн). Атăлçи федераллă округри регионсем хушшинче чи пысăк хаксем çулăхĕ тĕлĕшĕнчен 2,5 – 3,2 процентлă сĕтре палăрнă (46,12 тенкĕ). Пысăк хаксем çавăн пекех чăхсене (106,98 тенкĕ, 13-мĕш вырăн), тасатнă риса (38,34 тенкĕ, 13-мĕш вырăн), хуратула (67,55 тенкĕ, 13-мĕш вырăн) пырса тивнĕ.

ГУП ЧР «Шумерлинский издательский дом»

**МАЛАЛЛА**

**ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА**

**Директор-гл. редактор В.М. ХОХЛОВА.**

**Зам. главного редактора Н.П. ЧЕРНОВ.**

**УЧРЕДИТЕЛИ:**
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, Государственное унитарное предприятие ЧР "Шумерлинский издательский дом".

Газета зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ФС 18-2363 от 29.08.2005 г.

**НАШ АДРЕС:**
**429120, г.Шумерля, ул. Косточкина, 5.**
**E-mail: gazeta@cbx.ru vpered7@mail.ru**

**ТЕЛЕФОНЫ:**
**Гл. редактор - 5-12-20, 5-42-19 (факс);**
**Зам. главного редактора, информационно-аналитический отдел, прием рекламы и объявлений - 5-02-52. Обозреватели по вопросам социально-экономического развития города и района - 5-43-14**
**Отдел компьютерной верстки - 5-05-95**
**Бухгалтерия - 5-03-53**

**Газета выходит по пятницам (на русском и чувашском языках).**

Рукописи не рецензируются и не возвращаются. Авторы опубликованных материалов несут ответственность за точность приведенных фактов, цитат и прочих сведений. Точка зрения редакции не обязательно совпадает с мнением авторов.

Материалы на правах рекламы публикуются под знаком (P)

За содержание рекламных объявлений редакция ответственности не несет.

**Реклама, объявления, поздравления, соболезнования, благодарности публикуются только с предоплатой.**

**НАШИ БАНКОВСКИЕ РЕКВИЗИТЫ:**
**ИНН 2125004131**
**ОГРН 1022103028771**
**КПП 212501001**
**БИК 049700716**
**№ расч. сч. 40602810300000000062**
**№ корсч. 30101810000000000716**
**ГУП ЧР "Шумерлинский издательский дом".**

**Объем 1 п.л.**
**Печать офсетная**
**Индекс 31001.**
**Тираж 5934, в т.ч. на чувашском языке 299 экз.**
**Заказ № 1817.**

Газета сверстана в редакции. Время подписания газеты в печать по графику 17 часов.
Номер подписан в 17 часов.

Выпуск газеты осуществлен при финансовой поддержке Агентства по печати и массовым коммуникациям РФ.

**Дежурный по номеру Т.Л. АЛЕКСАНДРОВА.**

**Отпечатано в ГУП ЧР "Шумерлинский издательский дом": г.Шумерля, ул. Косточкина, 5**